Çирĕп экзамен тытма тивре

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çĕр-шыва сĕмсĕррĕн тапăнса кĕнĕ фашистла Германин хăватлă çарĕсем сехетпе мар, минутпа Мускав еннелле çĕмĕрттерсе-талпăнса пынă чух тепĕр тăватă çултан хĕн-хур урапи айĕнчен тухса уçă сывлăш çавăрса илнĕ пирĕн салтаксем фашизм йăвине çитсе Рейхстаг çине çĕнтерӳллĕн алă пусасси пирки кам шутланă-ши? Никам та. Фронтра юн юхнă, тылри хĕрарăмсемпе салтак ачисен ĕç вăхăтĕнчех куçĕсем куççульпе тулнă. Никам шутламан çĕртен «Çĕнтерӳшĕн!» тесе атакăна çĕкленсе пуç хунă салтаксен тĕлĕнмелле паттăрлăхĕ вара харама кайман: Мускав патне çитнĕ фашизм машинине çапса аркатса пирĕн çарсем ăна каялла çавăрнă, хăйĕн йăвине хăваласа çитерсе юлашки сывлăшне кăларнă. Пĕтĕм халăх пĕрле пулса пурнăçшăн, Çĕнтерӳшĕн кĕрешни, вăрçă çулĕ çинче миллионшар çын пуç хуни пустуй ĕç пулмарĕ.

Пурнăç малаллах шăвать. Тăван халăхăмăр Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитрĕ. Вăхăт иртнĕ май вăл хыçа юлнă кунсен йывăрлăхне çĕнĕ хумсем çине çĕклесе пирĕн ума унăн кашни утăмне çивĕчреххĕн кăларса тăратать, пĕлтерĕшне ӳстерет.

Çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕнче 93 çул тултаратăп пулин те, вăрçă вутçулăмĕнче иртнĕ кашни кун паянхи пекех асра.

Çамрăксем час-часах: «Вăрçă пуçланнине астăватăн-и тата епле астăватăн?» – тесе ыйтаççĕ. Вĕсем çак ыйтăва мирлĕ пурнăçа сыхлассишĕн хускатнине ăнланатăп. Çавăнпа вĕсен ыйтăвне пĕрре те хуравсăр хăвармастăп.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланни те, унăн малтанхи çухатăвĕсемпе çĕнтерӳ çулĕсем йăлтах манăн куç умĕнче иртрĕç.

Инçетри 1941 çул. Эпĕ ун чух Шупашкарти Чăваш педагогика институчĕн юлашки курсĕнче вĕренетĕп. Тĕрĕсрех каласан, патшалăх экзаменĕсем тытатпăр. Питĕ яваплă тапхăр. Тăватă çул (ун чух çаплаччĕ) вĕреннĕскерсем патшалăх экзаменĕсенче намăс курас мар тесе кунĕн-çĕрĕн алăран кĕнеке вĕçертместĕмĕрччĕ. Çапла вара июнĕн 22-мĕшĕнче те – уяр та илемлĕ çуллахи вырсарни кун – иртенпех юлташсемпе институтăн вулав залне кайса лартăмăр. 10 сехет çывхарать. Радиопа Мускавран правительство пĕлтерĕвĕ пуласси пирки хыпарларĕç. Пирĕн нимĕнле тимлĕх те çук. Радиона каласма шутласа кăларнă – калаçтăр, пире çĕнĕлĕхсемпе паллаштарса тăтăр. Анчах ку хутĕнчи пĕлтерӳ чĕрене çураканни пулчĕ. Шăп та лăп 10 сехетре Левитан дикторăн пĕлтерĕвĕ пирĕн пурнăçа вăрçă çулĕ çине тăратрĕ. Совет Союзĕн Министрсен совечĕн председателĕ çĕр-шывăмăрта пулса тухнă лару-тăрупа паллаштарчĕ. «Ирхи 4 сехетре вăрçă пуçланнă-мĕн. Нимĕç фашисчĕсем çĕр-шывăн Хĕвел Анăçри чиккисене пĕр пĕлтермесĕр тăршшĕпех атакăланă, чикĕри хуласем çине бомбăсем пăрахнă». Унччен шавлă пулнă вулав залĕ самантрах шăна вĕçни илтĕнмелле шăпланчĕ.

Радиопа пĕлтерӳ итлесе пĕтерсенех пирĕн патăмăра институт ректорĕ пычĕ. Вăл аудиторине кĕрсен студентсем хĕрсе кайсах хăйсем фронта каясси пирки, çĕр-шыва вĕсен пулăшăвĕ кирли çинчен каласма пуçларĕç. Кун çине ректор хуравĕ ансат пулчĕ.

– Тăхтăр! Экзаменсем вĕçленнесĕр эсир ниçта та каймастăр, – терĕ вăл. Куçĕ вара унăн хуйхăлăччĕ. Çамрăксем çак вăхăтра часрах фронта талпăннине ăнланчĕ вăл. Урăхла пулма та пултарайман.

Июнĕн 30-мĕшĕнче эпир юлашки экзамен тытрăмăр. Манпа пĕрле физикăпа математика факультетĕнче вĕреннĕ юлташсем пурте майлах çав кунсенче фронта каяссипе пурăнатчĕç. Çавăнпа та юлашки экзамен тытсанах институтпа сыв пуллашу каçĕ ирттертĕмĕр. Июлĕн 3-мĕшĕнче вара алла диплом илтĕмĕр. Ректор пире пĕрле пуçтарчĕ те килсене кайма ирĕк пачĕ.

Эпĕ тăван киле июлĕн 5-мĕшĕнче çитрĕм. Аслă пĕлӳ илнипе савăнмалла пек, анчах никамăн та сăнпитре савăнăç шевли çук. Эпĕ киле таврăнсанах мана çара ăсатасси пирки каласма пуçларĕç. Çак кун та çитрĕ. Июлĕн 9-мĕшĕнче ирхи 4 сехетре пирĕн пата ял советĕнче ĕçлекен хĕрарăм мана фронта илме повестка пырса пачĕ: 9 сехете Мăн Сĕнтĕр районĕн çар комиссариатне çитмелле. Пирĕн аттепе анне колхоза кĕменччĕ те лаши те килтеччĕ. Атте сăмах вакламасăр лаша кӳлчĕ, 8 сехет çурăра урапа çине аттепе иксĕмĕр ларса çула тухрăмăр. Çапла эпĕ вăрçа тухса кайрăм. Таврăнăп-и эпĕ унтан е çук – кăна вăл самантра Турă кăна пĕлнĕ.

Мана Харьков хулинчи интендант службин кĕске вăхăтлăх курсĕсене вĕренме ячĕç. Ун хыççăн лейтенант званипе Çурçĕр Хĕвел Анăç фронтне лекрĕм. 178-мĕш стрелковăй дивизин 171-мĕш стрелковăй полкĕ, 232-мĕш стрелковăй полкĕ... Хамăр тивĕçе кура салтаксене апат-çимĕçпе епле тивĕçтернине тĕрĕслесех тăнă май кун урлă пекех эпир малти линиреччĕ. Окопсемпе траншейăсем тăрăх салтаксене апат-çимĕç парса çӳрени паян та куç умĕнчех. Пĕррехинче 232-мĕш стрелковăй полкăн штаб начальникĕпе малти линие кайрăмăр. Эпир çитсенех нимĕçсем тапăнчĕç. Малти линири окопа траншейăпа мар, тӳррĕн кайма тухнă капитан ман куç умĕнчех пурнăçран уйрăлчĕ. Тепрехинче хĕллехи уяр кун пĕчченех малти линие кайма тухрăм. Ăнсăртран сиксе тухнă фашист самолечĕ тапăнчĕ те ниепле те хăпмасть. Икĕ хутчен пулеметран персе хăваларĕ, виççĕмĕшĕнче блиндаж патне тарса çитсен бомба пăрахса хăналарĕ, анчах... блиндаж алăкне çĕмĕрнисĕр пуçне сиен тăваймарĕ. «Кĕпепе çуралнă эсĕ», – терĕç каярахпа пирĕн тан мар çапăçăва курнисем.

Фронтра тăтăшах вилĕмпе юнашар çӳрерĕмĕр пулин те, фашист мăшкалĕ пулмарăмăр, çĕр-шыва та çăлса хăвартăмăр. Çавăнпа та çав Аслă вăрçа хутшăнса Çĕнтерӳ тунисене, ăна çывхартма пулăшса пуç хунисен тăванĕсене Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатăп. Аслă ăрурисен паттăрла çул-йĕрне паянхи çамрăксем малалла тăсасса шанса тăратăп. Вĕсем ăна тума пултарасси пирки манăн иккĕленӳ çук.

П. ЖИВОЙКИН.
Москакасси ялĕ.

РЕДАКЦИРЕН: Петр Иванович фронтри паттăрлăхне мирлĕ пурнăçра та сӳнме паман. 1946 çулта фронтран таврăннă ентешĕмĕр 38 çул тĕрлĕ шкулсенче пĕр улшăнмасăр ачасене вĕрентес ĕçре ирттернĕ, вĕсене патриотизмла воспитани панă, Тăван çĕр-шыва юратма тата хаклама вĕрентнĕ. Вĕрентӳ ĕçĕн ытларах пайне ĕнерхи фронтовик тĕрлĕ шкулсен директорĕнче ирттернĕ. «Президентăмăр 2010 çула Вĕрентекен çулталăкĕ тесе паллă тунине ырлатăп кăна. Учительсем тивĕç ăна, мĕншĕн тесен Тăван çĕр-шывăн шанчăклă хӳтĕлевçисене ӳстересси – вĕсен аллинче», – терĕ хамăр сăмах паянхи пурнăç çине кĕрсе кайсан фронтовик учитель.

«Фашистран та, кашкăртан та хăраман»

Кӳршĕлле Етĕрне районĕнчи Мăн Чураш ялĕнче çуралса ӳснĕ, ĕç ĕмĕрне 1951 çултанпа Муркаш районĕн аталанăвне панă Елена Ефимовна Самаковăпа калаçса ларатăп. Ĕçпе кушăрханă алăсене, хурашурне пайтах тӳснĕ чăваш хĕрарăмĕн сăнпитне пăхатăп та хамăр çак паттăр та аслă ăру умĕнче ĕмĕрлĕх парăмрине тепĕр хут туйса илетĕп. Эпĕ çеç те мар пулĕ. Иртнине тишкерсе малашлăха пăхакан тӳрĕ кăмăллă кашни çыннăн тивĕçĕ вăл. Калаçать те савăнать Елен аппа, вăл-ку ыйтăва сӳтсе явма тăрать те – куççульленет. 77 çичĕ хут тар юхтарнă ăру, куç шывланми пуличчен йĕнĕ аслă тăванăмсем... Аслă Çĕнтерӳ кунĕнче эпир сире кашнинех çĕре çити пуç тайса тав тума тивĕç. Пĕтĕмпех пулса çитеймест пулсан каçарăр – паянхипе çеç пурăнмастпăр.

– Пирĕн тĕле хаяр та тĕлĕнмелле хăрушă вăрçă кăларса фашистсем пире чуралантарас терĕç пуль. Çук çав, ирĕке хăнăхнă Совет Союзĕн халăхĕ вĕсене махха памарĕ. Çухатусем, паллах, калама çук пысăк пулчĕç. Анчах çавăн витĕр тухса эпир хамăр ачамăрсемпе мăнуксен ырă малашлăхне никĕслерĕмĕр, – терĕ каласу пуçарнă май эпĕ хăйĕн патне мĕн сăлтавпа пынине ăнланса илнĕ Елен аппа.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă чух 11 çулта пулнă кинемей çав вăхăтри тыл пурнăçне питĕ аван астăвать. Вулама-çырма вĕренсе ашшĕ-амăшĕнчен малалла кайнă ачасем вăл вăхăтра пенси мĕнне пĕлмесĕрех тата ун пирки шутламасăрах, ĕç укçи курмасăрах çимелĕх çăкăр пултăр та Çĕнтерӳ хăвăртрах çиттĕр тесе ашшĕ-амăшĕпе пĕрле иртен пуçласа çур çĕрччен хирте тырă вырнă, аван çапнă, хире тислĕк кăларнă, фронта валли лашапа тырă леçнĕ, кăшт ӳсерехпе вăрман каснă-турттарнă.

Е. Самаковăн вăрçă терт-нушине самаях курма тивнĕ. Ачаллах ĕçре пиçĕхнĕскер вăрçăччен икĕ куккăшĕ те летчика вĕреннине, вĕсем малтанхисен ретĕнчех фронта кайнине, кĕçĕн куккăшĕ пирки кукамăшĕ суя вилнĕ хут илсе йĕнине лайăх астăвать.

– Миша кукка вара вилмен пулнă. Ăна нимĕçсем персе антарсан çунакан самолетран йывăр пиçсе кайнăскерне медсестра туртса кăларнă пулнă. Вăрçă тăршшĕпех вăл летчик пулса çапăçнă. Хăйне фашистсем 3 хутчен персе антарнине, анчах парăнтарайманнине вăл çĕкленӳллĕн каласа паратчĕ. Аслă кукка та фронтра истребитель пулнă. Вăрçă хыççăн та службăра пулнипе унăн летчик стажĕ 25 çул пулчĕ. Манăн та куккасем пек летчик пулас килетчĕ, анчах вăрçă хыççăн

Шупашкарти авиашкулта летчик-инструктор пулса ĕçленĕ Миша кукка хăйĕн летчик ĕмĕрĕнче маншăн та терт-нушине курса тесе вĕрентмерĕ, – аса илет кăçал 80 çул тултаракан кинемей.

Летчика вĕренеймен, анчах ĕçрен хăраман Елен аппа вара çĕр-шыва ытларах усă пултăр тесе вăрман касма тата вăрмантан лашапа-çунапа йывăç турттарма кĕрĕшнĕ. Вăрман каснă чух пĕррехинче хăйне çăкăр пĕçерме хăварсан, пиçнĕ çăкăрсемпе юлташĕсем патне кайма тухсан 50-60 метртан 12 кашкăр иртсе кайни паян та ĕç ветеранĕн асĕнчен тухмасть. «Куккасемпе аттесем фашистсенчен хăрамасăр çапăçнă чух кашкăрсенчен хăрамалла-и вара? Хăранине нимĕн те астумастăп. Юлташсем патне çитсен çурăм çинче пĕр кутамкка çăкăр пулнине аса илсен çӳç вирелле тăчĕ çеç», – терĕ кăмăлĕ уçăлнă ĕç ветеранĕ.

Вăрмана кайнă чух сăрталла «полуторка» автомашинăна ушкăнпа пĕрле тĕксе хăпартнисем, кайран вара юрă юрласа ярăнса аннисем, çурхи-кĕрхи сивĕ шывра çăпатапа шăмпăлтатса утнисем, çав йывăрлăхсем паян урасен ыратăвĕнче палăрни ветеран асĕнчех.

1951 çулта Тушкассине качча килнĕскер Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра ĕç ĕмĕрне ирттернĕ: хирте те, весовщицăра та, чăх ферминче те, сыснасем пăхнă çĕрте те ответлăха туйса вăй хунă.

Паян Елена Ефимовна Самакова пенси укçи пĕчĕк пулнишĕн кăна хурланать. «Çĕршыв ертӳçисен пирĕн пата алă çитеймерĕ курăнать», – терĕ ветеран хăйпе тĕл пулса каласнăшăн тав туса Мăн Сĕнтĕрти ваттисен çуртĕнчен ăсатнă май.

Анатолий БЕЛОВ.

Хуçăлман, чун ăшшине çухатман

Вăрçă… 65 çул… Çапла, Аслă Аттелĕх вăрçи вĕçленнĕренпе кăçал 65 çул çитрĕ. Анчах халăх асĕнчен тухман вăл, тухас та çук. Сĕмсĕр хаяр тăшманпа, фашистла Германипе, пирĕн çĕр-шыври мĕн пур халăх пĕр çын пек пулса паттăррăн çапăçнă. Çавăнпах 1945 çулхи майăн 9-мĕшĕнчи Çĕнтерӳ те пирĕн енче пулнă. Çав кунранпа 65 çуркунне уйăрса тăрать пире. Анчах никам та, нимĕн те манăça тухман.

Мăн Токшик ялĕнче те Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче паттăррăн çапăçнă ветерансен йышĕ çулсеренех сахалланса пырать. Анчах пур-ха паян вĕсем, хальхи çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăракансем.

Григорий Данилович Данилов вăрçă ветеранĕ 1924 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕнче йышлă хресчен çемйинче çуралнă. Ултă пĕр тăван пулнă вĕсем, анчах тĕрлĕ сăлтавсене пула виçĕ ачи пĕчĕккĕллех вилнĕ. Çити-çитми пурнăça Григорийăн та ачаллах активме тивнĕ. Шаптакри пуçламăш шкултан, кайран Токшикри 7 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнă каччă малтанах хăйсен ялĕнчи «Динамо» колхозра ĕçлеме пуçлать. Ку вăхăтлла колхоз та вăй илнĕччĕ ĕнтĕ, анчах мирлĕ пурнăça хаяр вăрçă татать.

Ялти ытти çамрăксемпе пĕрле Г. Данилов та хăйĕн ирĕкĕпе Тăван çĕр-шыва сыхлама кайма шутлать. 1943 çулхи нарăс уйăхĕнче ялти виçĕ каччă вăрça тухса каяççĕ: Павел Егорович Егоров, Иосиф Антонович Антонов, Григорий Данилович Данилов. Кĕçĕн командирсен курсĕнче вĕренсе кĕçĕн сержант званине илсен пирĕн ентеш Г. Данилов 1-мĕш Белорусси фронтĕн 219 Кременчуг танк бригадинче автоматчик пулса тăшманпа çапăçать. Пĕрре кăна мар вутпа вилĕм хушшинче пулать вăл. Беларуçри Слуцк хули патĕнчи пĕр хаяр çапăçура вăл питĕ йывăр аманать: ӳпкене снаряд ванчăкĕ лекет. Çапăçу хирĕнчен ăна хăйсен ял каччи И. Антонов илсе тухать. Кайран хăй те аманать, вăрçăран хăрах куçăр таврăнать.

Госпитальте виçĕ уйăх сипленнĕ хыççăн пирĕн ентеш Слуцк хулинчех службăра тăрать. Комендант полкĕнче хулари пурнăça йĕркелеме пулăшать. Çĕнтерӳ кунне Г. Данилов Польшăри Ланцберг хулинче кĕтсе илнĕ.

Хĕрӳ çапăçусемпе вăхăтсăр çухатусем, Çĕнтерӳ саманчĕ... Мĕн кăна чăтса ирттермен пулĕ салтак, анчах нихăçан та пуç усман, каялла чакман. Вăрçă хыççăнхи çăмăл мар çулсенче те тертпе нушана пăхмасăр тăван хуçалăхра ырми-канми ĕçленĕ. Колхозăн садне шанса панă Григорий Даниловича. Икĕ гектар çĕр çинче темĕн терле улмуççи, чие, йĕплĕ, сарă, хура, хĕрлĕ хурлăхан тĕмĕсем, çырла ӳснĕ. 1979 çулхи сивĕпе улмуççисем нумай пĕтсен те ĕнерхи салтак пуç усман. Колхоз садне вăл çĕнĕрен чĕртнĕ. Ĕмĕр тăршшĕпех ватă салтак çут çанталăка юратса, ăна ăнланса, унпа пĕр чĕлхе тупса пурăннă. Хăй пурнăçĕнче мĕн чухлĕ йывăç-тĕм çитĕнтермен-ши вăл? Пурнăçри кашни савăнăçлă саманта Г. Данилов йывăç лартса паллă тунă. Кунпа пĕрлех вăл килĕнче утар тытнă. Вăл çут çанталăкпа туслă çыхăну тытни кашни утăмрах палăрса тăнă. Çакă ял çыннисемшĕн те ырă тĕслĕх пулнă, пур, пулĕ те.

Вăрçă темĕн чухлĕ инçерех юлсан та хăй пирки ветерана самантлăха та мантарман. Акă снарядăн ӳпкери ванчăкĕ хăй çинчен вăрçă пĕтсен 23 çултан аса илтернĕ. Сывлăх хуралçисем вăхăтра операци туса вилĕмрен çăлса хăвараççĕ ĕнерхи салтака.

– Тутă хырăмпа, ăшă тумпа выляса-кулса ӳсме тӳр килмерĕ пире. Эпир мĕн курнине, мĕн тӳснине ачасемпе мăнуксем ан курччăрах, – терĕ вăрçă ветеранĕ паянхи савăк пурнăçшăн хĕпĕртесе.

Чи пысăк та мухтавлă уявра – Çĕнтерӳ кунĕнче вăрçă ветеранĕ хăйĕн костюмне тăхăнать. Кăкăрĕ çинчи кашни награда мĕн тери пĕлтерĕшлине вара пĕр хăй кăна пĕлет.

Хисеплĕ Григорий Данилович! Нумай хурлăх тӳсме тивнĕ сире, анчах эсир хуçăлман, чун ăшшине çухатман.

Тавах сире Аслă Çĕнтерӳшĕн!

Ю. ЕВСТАФЬЕВА,
Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен.

Сăн ӳкерчĕкре: Г. Данилов 1947 çулхи январĕн 19-мĕшĕнче (Симферополь хули).